1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

Шупашкар район хаçачĕ

ТĂВАН ЕН

19 (9614) № ❋ 2009 çулхи февралĕн (нарăс уйăхĕн) 25-мĕшĕ. Юн кун ❋ Хакĕ ирĕклĕ

Ĕçсĕрлĕх

НУМАЙĂШĔ РАЙОН ТУЛАШĔНЧЕ ĔÇЛЕНĔ

«График килĕшмерĕ те ĕç вырăнне хăварса ялтан хулана килтĕм. Кунта вара вырăн тупасси тата та кансĕртерех. Халь хама хам вăрçатăп – малтанхи вырăнтах вăй хумаллаччĕ», – çапла хурлăхлăн каласа кăтартрĕ ĕçсĕр юлнă пĕр хĕрарăм. Çапла, паян тĕнче шайĕнче кризис пынă вăхăтра мĕнле те пулсан хăвăн ĕç вырăнне сыхласа хăварма тăрăшмалла. Çакна цифрăсем те кăтартса параççĕ. Çак тата ытти ыйтăва паянхи хăнапа – халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр пуçлăхĕпе Л.П.ПАХОМОВПА – хускатăпăр.

– 2008 çул вĕçĕнче пирĕн центрта 535 çын учетра тăратчĕ. Çак цифра кĕске вăхăтрах палăрмалла ўсрĕ – уйăх çурăра тата 443 çын пирĕн пата килчĕ, вĕсенчен 8,8 проценчĕ – ĕçрен кăларса янисем. Çапла вара февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне пирĕн центрта 847 ĕçсĕр çын учетра тăрать. Çак çынсенчен 324-шĕ иртнĕ çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ хыççăн ĕçрен тухса кайнă. Эпир регистрациленĕ 281 çын çулталăк майлă ĕçлемеççĕ. Штата кĕскетнипе районта çеç мар, республика тулашĕнче вăхăтлă ĕçленĕ çынсем – халăхра калашле «шабашкăна» çўренисем – массăллă килме пуçларĕç. Ытларах çуртйĕр хăпартма çўренĕ, паян вара кризис пынă вăхăтра ку ĕç малалла каяймасть. Ирĕксĕрех тăван енех тавраннă лекет. Пирĕн пата 88-шĕ центра килнĕ.

– Леонид Пантелеймонович, центра пулăшу ыйтма килекенсем пирĕн район территорийĕнче е унăн тулашĕнче ĕçленĕ?

– Тўрех калатăп, пирĕн килнĕ ĕçсĕррисенчен 60 процент ытларахăшĕ хулари предприяти-организацисенче ĕçленĕ. РФ Сывлăх сыхлав тата социаллă аталану министерствин иртнĕ çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнчи хушăвĕпе килĕшўллĕн эпир мониторинг ирттеретпĕр. Организаци пĕтнипе, ĕçлекенсен штатне чакарнипе... – пĕр сăмахпа ĕçсĕррисем мĕнле сăлтавпа пирĕн пата килнине тишкеретпĕр. Çак сведение эрнесерен Чăваш Енри ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службине çитеретпĕр. Пирĕн районпа илсен, паянхи куна çакăн пек ўкерчĕк: кăçал «Атлашевожилкомуслуга» обществăран тата Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи çар комиссариатĕнчен виçшер çын сокращение лекнĕ. «ИЗВА» обществăра производство загрузки чакнипе тулли эрне ĕçлемелле маррипе йышăну кăларнă. Февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне кунта 156 çын кĕскетнĕ ĕç эрнипе вăй хунă.

Фото ўкерчĕкĕ авторăн.

– Эсир ĕçсĕррисене учетран та кăларатăр. Çак мĕнле сăлтавпа пулать?

– Паллах, килекенсене ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерме тăрăшатпăр. Çапла кăçал 49-шĕ ĕçе вырнаçнă хыççăн учетран тухрĕç. 21 çынна профвĕрентĕве ятăмăр. Ача амăш пулма хатĕрленекенсем пирĕн çăмăллăхсемпе усă курма пăрахаççĕ, унашкаллисем 14-ăн пулчĕç. Çавăн пекех йĕрке ыйтнă пек пирĕн ыйтусене пурнăçламаннисем те тĕл пулаççĕ – регистраци вăхăтне пăхăнманнипе 17-шне учетран кăлартăмăр.

– Ĕçсĕррисем тўрех «ваканси» графана пăхаççĕ. Районта ĕç вырăнĕсем пур-и-ха?

– Паянхи куна 194 ĕç вырăнĕ. Учетра тăракан 4,3 çынна пĕр ĕç лекет.

– Ĕçсĕррисен хисепĕ тата та ўсме пултарать. Хăвăр енчен ку енпе эсир мĕнле йышăнусем кăларма пултаратăр?

– Ĕç рынокĕнчи çивĕч ыйтăва чакарас тесе 2008 çулта декабрĕн 31-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе Чăваш Енри халăха ĕçпе тивĕçтерессипе тĕллевлĕ программа йĕркелерĕç. Унпа килĕшўллĕн пирĕн районта предприяти-организацисенче 930 вăхăтлăх ĕç вырăнĕ хатĕрлемелле. Ĕç вырăнĕпе тивĕçтерекенсене субсиди лекет. 15 çынна республика тулашĕнче ĕç вырăнĕ тупса памалла, тата ытти çăмăллăхсем пулĕç.

А.СУСМЕТ.

Ĕçсĕрлĕхпе çыхăннă тепĕр материала 2-мĕш страницăра вулăр.

Отчетлă пухусем

ПУРНĂÇЛАНĂ ĔÇСЕМ

Çак кунсенче Кăшавăш ял тăрăхĕн администрацийĕн отчетне Кăрмăшсемпе Мăналсем хак парĕç. Вĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕнчен ыйтмалли чылай. Чăн та, ял администрацийĕн пуçлăхĕн А.Х. Афанасьевăн пурнăçланă ĕçсем çинчен каламалли çук мар. Сăмахран, Вăрăмтури Шоссе урамĕнче 500 метр тăршшĕ газ пăрăхĕ тăснă. Кăрмăшри каяшран тасатмалли сооружение юсаса хута янă, çак ĕçе пурнăçлама район 600 пин тенкĕ уйăрнă. Пĕлтĕрхи ноябрьте Мемешри Ленинград урамĕнчи шыв пăрăхне юсанă. Çак енĕпе Кăшавăшсем те хастар. Иртнĕ çул Кăрмăшри нумай хваттерлĕ 5 çурта хваттерсенче хутса ăшăтмалли кăмакасем лартас ĕçе вĕçленĕ. Ял пурнăçĕпе çыхăннă ытти ыйтусене те çĕкленĕ пухусенче.

Ю.СЕРГЕЕВ.

ВЫРĂНТИ ЫЙТУСЕМ

Ишлей ял тăрăхĕн администрацийĕн отчетлă пухăвĕсем вĕçленнĕ. Вĕсенче çынсем социаллă пурнăç ыйтăвĕсене те çĕкленĕ. Сăмахран, Етĕрнекассине, Хурамакассине, Чурачăка «ГАЗель» çўреттерсе пассажирсем турттарма, Хурамакассинчи клубпа пĕвене юсама ыйтаççĕ. Мускаринкассинчи çĕнĕ урамсенчи юпасем çине электролампăсем çакмалла, Олкашри клуба газпа ăшăтма пуçламалла, урамсене юртан вăхăтра уçтармалла, ялсенче каяш пухма контейнерсем лартмалла, Чурачăксем валли ача сачĕ тумалла теççĕ. Ыйтусене администраци пуçлăхĕ Я.В.Кушев, çавăн пекех федераци, республика тата район представителĕсем хуравланă.

С.СЕРЕГИН.

АЧАСЕМ ВАЛЛИ ТЕ КИРЛĔ

Февралĕн 21-мĕшĕнче Хыркассинче иртнĕ пухура вырăнти хăй тытăмлăх ĕç-хĕлĕпе Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.С.Тереев паллаштарнă. Унта Криккакассисем, Кайриункăпуçсем, Хыркассисем, Вăрманкассисем пухăннă, хăйсен ялĕсенчи çивĕч ыйтусене çĕкленĕ. Тĕслĕхрен, амăшĕсем ялсенче ачасене вылямалли лаптăксем уйăрма, вĕсене илемлетме ыйтаççĕ, пенсионерсем ялсенчен каяш турттарса тухма контейнерсем вырнаçтарма сĕнеççĕ. Шыв пăрăхĕсене вăхăтра юсамалла, ялсенче çул тумалла, пĕвесем пĕвелемелле теççĕ. Тĕллевсем нумай, анчах бюджетра укçа çитсе пымасть. Çакна палăртнă докладчик.

С.АТИЛОВ.

Республикăра

ПАРНЕ – «ВАЗ»

Февралĕн 20-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров Шупашкарти Хĕрлĕ лапамра ЧР Шалти ĕçсен министерствин службисене 60 çăмăл автомашина пани çинчен пĕлтернĕ. Вĕсенчен 48-шĕ милицин яллă вырăнсенчи участоксенчи уполномоченнăйĕсене лекет. Шел те, районти шалти ĕçсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн район милицине хальхинче пĕрре те паман. Пысăк парне валли укçа-тенкĕ республика бюджетĕнчен уйăрнă.

В.НИКИТИН.

Хисеплĕ вулаканăмăрсем!

Район хыпарçине кăçалхи иккĕмĕш çур çур валли «Чăвашпичет» АУО киоскĕсенче илсе тăма йўнĕпе çырăнма пулать. Пĕр уйăхлăх çырăнас тесен 21 тенкĕ тўлемелле, виç уйăхлăха – 63 тенкĕ, ултă уйăхлăха – 126 тенкĕ. Кун пек çырăнтару мартăн 31-мĕшĕччен пырать.

РАЙОНПА ЯЛ ХЫПАРĔСЕМ

ПИЛĔК ВЫРĂН – ЛАЙĂХ КĂТАРТУ

Районта çулсерен «Поиск» наукăпа практика конференцийĕ иртет. Вĕрентў управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, хальхинче республикăри куçăмсăр тура 7 ĕç тăратнă, унтан 6 проект куçăмлă тура лекнĕ. Çĕнтерў кайăкĕ хальхинче те пирĕн районти ачасемпе юнашар вĕçнĕ. «Йывăçа хатĕрлесси» номинаци Çĕньялти Н.Гурьянова, «Шухăшласа кăларни» номинаци Чăрăшкасси шкулĕнчи А.Кудряшовпа А.Сумкова пĕрремĕш вырăнсемпе савăнтарнă. Вăрман-Çĕктерти А.Погодейкин та шухăшласа кăларма юратать. Унăн ĕçне иккĕмĕш вырăнпа хакланă. Кўкеçри ача-пăча пултарулăх центрне чупакан Р.Павлов «Техника пултарулăхĕ» номинацире иккĕмĕш вырăнпа палăрнă. «Практика пултарулăхĕ» номинаци те призлă вырăн парнеленĕ. Ача-пăча пултарулăх центрĕнченех О.Журавлева – виççĕмĕш. Финала тухнă ултă ĕçрен пиллĕкĕшĕ призлă вырăна тухни – лайăх кăтарту. Малашне те çапла пултăрччĕ.

А.АРДАЛИОНОВА.

ЧИ САМĂРРИ – ВЕРА ПАВЛОВАН

Çапла пĕтĕмлетме пулать выльăх-чĕрлĕх отраслĕн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне тишкернĕ май. Мăйракаллă шултра выльăх ўт хушаслăхĕпе пирĕн район кăтартăвĕ (444 грамм) республикăра чи пысăкки мар пулин те уйрăм кăтартупа хăпартланма пулать.

Ленин ячĕллĕ кооперативри çамрăк ĕне выльăх талăксерен 978 грамм таран самăрăлнă. Сысна самăртакансенчен (районти иртнĕ çулхи кăтарту – 442 грамм) «Приволжское» вĕренў хуçалăхĕнчи Вера Павлована çитекен республикăра пулман. Унăн ушкăнĕнчи сысна-сем пĕлтĕр талăксерен 727 грамм таран ўт хушса пынă.

В.ТИТОВА.

КОНСУЛЬТАЦИШĔН УКÇА ЫЙТМĔÇ

Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕн регионти уйрăмĕ Шупашкарта, Чăваш наци библиотекинче, гражданасене тўлевсĕр пулăшу пама пуçлани пирки хыпарланăччĕ.

Пĕлтерер, çывăх вăхăтра çак кунсенче йышăнĕ вăл: февралĕн 27-мĕшĕнче – çемье правипе, мартăн 13-мĕшĕнче – ĕç правипе, мартăн 20-мĕшĕнче – конституци тата административлă правăпа, мартăн 27-мĕшĕнче – социаллă ыйтусемпе. Асăннă кунсенче юрист патне 15 сехетрен тытăнса 17 сехетчен лекме пулать. Мартăн 6-мĕшĕнче законодательствăри çĕнĕлĕхсемпе паллаштарĕç. Ун чух консультантсем 16 сехетре ĕçе тытăнĕç. Консультаци çырăнас тесен 62-01-49 номерпе шăнкăравлама пулать.

В.ЭВЕРККИ.

ХАРĂССĂН “КАТЮША” ЮРЛАРĔÇ

Район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксен Правительствин членĕсем вĕрентў управленийĕн специалисчĕ В.Н.Александрова ертсе пынипе февралĕн 21-мĕшĕнче Атайкасси шкулĕнче Тăван çĕршыва хўтĕлекен кунне халаллана концерта хутшăнчĕç.

Çывхарса килекен суйлав, çĕршыв хўтĕлевçисем – çак ыйтусене хускатрĕç çамрăксем тата вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем. Çакăнтах ашшĕсен конкурсĕ пулчĕ, тĕл пулу «Катюша» юрра харăссăн юрланипе вĕçленчĕ.

А.АЛИНИНА.

Синоптиксем пĕлтернĕ мăрăх

Шăмат кун, февралĕн 21-мĕшĕ
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах юр çăвать,
кăнтăрла **-5**
çĕрле **-6**

Тунти кун, февралĕн 23-мĕшĕ
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах юр çăвать,
кăнтăрла **-2**
çĕрле **-2**

Вырсарни кун, февралĕн 22-мĕшĕ
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах юр çăвать,
кăнтăрла **-4**
çĕрле **-7**

Ытлари кун, февралĕн 24-мĕшĕ
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах юр çăвать,
кăнтăрла **0**
çĕрле **-1**

Аттестаци

ПЕДАГОГСЕМ ЭКЗАМЕН ТЫТАÇÇĔ

«Вĕрентӳ» наци проекчĕ пурнăçа кĕме пуçлани педагогсем хушшинче ирттерекен аттестацине те çĕнĕ варкăш кĕртрĕ. Квалификацие ӳстерес тесен паян самай тар тăкма лекет. Ку вĕренӳ çулĕнчи аттестаци мĕнле йĕркепе иртнĕ-ха? Çак тата ытти ыйту пирки район администрацийĕн вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕ А.К.СМИРНОВ каласа кăтартать.

– Профессири ăсталăха ӳстерес тесе педагогсем тата вĕрентӳ учрежденийĕсен пуçлăхĕсем хушшинче çулсерен аттестаци иртет. 2008 -2009 вĕренӳ çулĕнче пурĕ 142 заявлени йышăнтăмăр, – ***пуçларĕ калаçăва Александр Константинович.*** – Вĕсенчен 21-шĕ аслă, 93-шĕ пĕрремĕш, 28-шĕ иккĕмĕш квалификациллĕ категори илме тăратнă. Аттестаци виçĕ таппăрпа иртет. Паллах, вăхăчĕ самай кирлĕ. Çак вăхăтра заявленисене каялла илекенсем те (18 çын) пулчĕç. Вĕсенчен 9-шĕ çакна ĕçрен тухса кайнипе çыхăнтарчĕç.

Пĕрремĕш тапхăрта педагогсем экзамен тытрĕç. Вăл патшалăх пĕрлĕх экзаменĕн формипе пулчĕ. Кунта çакна та палăртса хăварасшăн, пирĕн районти 5 педагог 100 балл пухма пултарчĕç. Вĕсем çаксем: Мамăш шкулĕнчи химии вĕрентекенĕ В.Н.Бычкова, Апашри вырăс чĕлхипе литература вĕрентекенĕ Е.Н.Федорова, Çĕньял-Покровскинчи, Вăрман-Çĕктерти, Тутаркассинчи математика педагогĕсем А.В.Иванова, Л.А.Григорьева, А.Н.Яковлева. Предмета мĕнле вĕрентнине тĕрĕслениçĕр пуçне тата нормативлă право документсĕсене, вĕрентӳри саккунсене пĕлнисене те пăхаççĕ. Паянхи пурнăç ыйтакан технологипе уроксене ирттеретĕн е çук – çакă та малти вырăнта тăрать. Ку енпе пирĕн районти педагогсем илме май килнĕ 50 балран вăтамран 36,7 балл пухма пултарчĕç. Виççĕмĕш тапхăрта вара педагогсем профессиллĕ конкурссене хутшăннине, ачасене воспитани парассипе мĕнле ĕçленине, ашшĕ-амăшĕсемпе попечитель канашĕсен шухăшне шута илеççĕ.

Педагогсемпе вĕрентӳ учрежденийĕсен пуçлăхĕсем пур тапхăр витĕр тухса та пĕтрĕç. Аттестаци пĕтĕмлетĕвĕ вара çакнашкал: 19 ĕçчен аслă, 76-шĕ пĕрремĕш, 24-шĕ иккĕмĕш квалификациллĕ категориллĕ пулчĕç. Нумай пулмасть ертӳçĕне ларнă 6 çынна 1-мĕш квалификациллĕ категори патăмăр.

А.СУСМЕТ.

Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

Ыйту-хурав

КАРТОЧКА ÇИНЧЕ УКÇА ÇУК

«Çĕнĕ çултан ĕç укçине Перекет банкĕнчен карточкăпа илме пуçларăмăр. Кĕмĕле хамăр предприятире панă чухне аванс тата ĕç укçин кунĕсенче шăп та лăп илеттĕмĕр. Халĕ урăхла ӳкерчĕк. Февралĕн 20-мĕшĕнче аванс илмеллеччĕ. Унтанпа 4 кун иртсе кайрĕ, халĕ те карточка çинче укçа çук. Айăпĕ камра-ши? Юратнă арçынсем валли уяв сĕтелĕ хатĕрлеме те май килмерĕ».

Пĕр предприятирен килнĕ коллективлă çак ыйтава хуравлама эпир Раççей перекет банкĕн Çĕнĕ Шупашкарти 8102-мĕш номерлĕ уйрăмăн пирĕн районти 8102/016 номерлĕ хушма офисĕн заведующийĕпе А.Н.Алексеевапа çыхăнтăмăр. «Карточкăсемпе нимĕнле чăрмав та пулмалла мар. Енчен те предприятирен е организацирен паян кăнтăрлаччен ĕç укçине тата списока куçараççĕ пулсан, çак кунах 15 сехетрен карточка çинче укçа пулать. Списокпа ĕç укçине кăнтăрла 12 сехет хыççăн куçарсан – ыран ирхине. Ку тĕслĕхре пирĕн енчен нимĕнле чăрмав та çук. Айăплисене хăвăр предприятире ĕç укçине банка куçарассипе ĕçлекен явапла çынсем хушшинче шырамалла», – терĕ Алина Николаевна.

А.АРДАЛИОНОВА.

«ТУРĂ ПАНĂ ÇЫН»

А.Н.Николаев 60 çула çитрĕ пулин те, çăл куç пек тапса тăракан вăй-халĕпе, ĕçри пултарулăхĕпе тепĕр яшран ирттерет. Ун çине пăхсан чăваш юманĕ аса килет. Çут çанталăкăн тĕрлĕ синкерне тӳссе пиçĕхнĕ çав йывăç пекех Андрей Николаевичăн характерĕ те хура-шурпа çирĕпленнĕ.

Ултă çултанах алли ĕç çумне çыпçаннă. Чухăн хресчене ĕçченлĕх çеç выçлăхран çăлма пултарнă вăл вăхăтра. Сархурăнти Милидовсен кил-йышĕнчи Андрей аслă ывăл тивĕçĕпе кĕçĕннисене ура çине тăратма пулăшнă. Ачаранах çăкăр хакне пĕлсе ӳснĕ. Хулана çулла сĕт, хĕлле çĕр улми сутма çӳренĕ. Ачалăхĕ вăйăкулăра мар, ĕçре иртнĕ ял ачин: утта кайнă, тырă вырнă, чăпта çапнă, лашапа суха тунă... Вĕренӳре те ĕлкĕрсе пынă.

Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

✪ Пушар хуралĕн хисеплĕ ветеранĕ А.Н.Николаев.

Нимĕнле йывăрлăх умĕнче те пуçа усман çамрăк тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ пулса çитĕннĕ. "Салтака кайма повестка илсен савăннипе сарайĕнче пĕр сехет ташларăм," – каласа парать А.Николаев. Çартан таврăнсан Шупашкарти ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. Кăнтăрла вĕренет, каçхине ĕçлет. Пĕрремĕш курс пĕтерсен ăна кунти лабораторие куçараççĕ. Аслă пĕлӳ илсен 19-мĕш училищĕре директор çумĕн пуканĕ ăна валли хатĕр пулнă. Институтри пĕлĕшĕпе ăнсăртран тĕл пулни карьерăри çул-йĕре тĕпренех улăштарать. Республикăри пушар хуралĕн управленийĕнче аслă инженер должноçне вырнаçать. Николаевсен çамрăк çемйине пурăнмалли кĕтес параççĕ. Ӳрĕк, ăслă, таса чунлă чăваш ачи часах ĕç майне хăнăхса пырать. Службăна вырнаçсан пĕр уйăхранах паттăрлăхпа палăрнăшăн хисепе тивĕçет. Шупашкарти Б.Хмельницкий урамĕнчи йывăç сарайсем çуннă çĕре инкек сăлтавне тĕпчеме В.М.Белов наставникĕпе çитеççĕ. Пушар лаптăкне чавнă чух ун кĕреçи айне Ф-1 мина лекет. Çакăншăн ăна "Альпинист" радиоприемникпе наградăлаççĕ. Пушар хуралĕнче тăрăшса вăл хаклă парнене, Тав хучĕсемпе ытти наградăна сахал мар тивĕçнĕ. Хăйĕн пĕлĕвне анлăлатас тĕллевпе тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕнче вĕренет.

Йывăр туртакан лашана тата ытларах тиеме тăрăшаççĕ. Андрей Николаевича та кирек епле лава туртма вăй-хал çирĕплĕхĕ пулăшать. Афганистан вăрçи пуçлансан унта яма ыйтса рапорт çырать вăл. Министерствăна чĕнсе ăна çапла хурав параççĕ: "Шупашкар районĕнче тепĕр Афганистан пур. Пушар чаçне ертсе пымалла пулать, сирĕн çинчех çĕнĕ депо, унтах ĕçченсем валли пурăнмалли пӳлĕмсем тăвасси пулĕ".

1984 çулта май уйăхĕнчен А.Николаевшăн пирĕн районти хĕрӳ кунсем пуçланаççĕ. Вырăнти хуçалăхсенче пушар хуралĕ йĕркелес, пурлăхпа техника базине пуянлатас тĕллевсем тăнă унăн умĕнче. Районта пушар чаçĕн çĕнĕ деповне тума вырăн тупассине, проект хатĕрлессине татса панă. Мастерĕ те, прорабĕ те – хăех. "Çĕрле рейда тухса кайнă пулсан, ир валли ун çинчен редакцире материал выртнă", – каласа парать пушар хуралĕн ветеранĕ. Вут-çулăмпа кĕрешмелли тепĕр витĕмлĕ мел – çивĕч сăмах – пулнă унăн хĕçпăшалĕ. Райкомăн пĕрремĕш секретарĕ Г.В.Романов ăна Турă панă çын тесе хисепе хунă. Районти партипе хуçалăх активĕн пухăвĕнче яланах сăмах калаттарнă.

Андрей Николаевич вун тăватă çул, тивĕçлĕ канăва тухиччен, ертсе пынă районти пушар хуралĕн чаçне.

1998 çултанпа А.Н.Николаев уйрăм çын патĕнче ертсе пыракан должноçсенче вăй хурать. Халĕ "РыбаLOVE" предприятире тĕп инженерта тăрăшать. Иртнĕ çулталăк вĕçĕнче Андрей Николаевич 60 çулхи юбилейне паллă турĕ. Тивĕçлĕ канура пулин те килте алă усса ларма шутламасть-ха.

А.ИЗМАН.

☺ ☺ ☺

– Авланнă хыççăн картла укçалла выляма та кирлĕ мар.
– Мĕншĕн?
– Выляса ярсан арăм вăрçать, выляса илсен укçине туртса илет.

КОМИССИ ЛАРĂВĔ

Кĕçнерни кун район администрацийĕ çумĕнчи административлă комиссин черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Унта Питтукассинчи – 7, Лапсарти – 3, Мăн Пӳкассинчи – 3, Чăрăшкасси ял тăрăхĕнчи – 8, Котякри – 4, Етĕрнекассинчи, Шорккари, Ишлейри тата Матикассинчи 1-ер çемьене Чăваш Республикин Административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан саккунĕн 11-мĕш статйине пăхăнманшăн – çуртйĕр умне автомашина лартса, ăна юсаса тавралăха вараланăшăн, ыттисене асăннă саккунăн 10-мĕш статйине пăхăнманшăн – ял тăрăхĕн шутланакан çĕр çине строй-материал, ытти ăпăр-тапăр купаласа тăратнăшăн – е пĕррелĕхе асăрхаттарнă, е штраф панă.

С.СЕРЕГИН.

ПАССАЖИРШĂН ТА ЯВАПЛĂ

Автомобиль рулĕ умне ларакан çын хăй пурнăçĕшĕн çеç мар, пассажиршăн та явапла. Çакна пĕр самантлăха та манас çук. Анчах Шĕнерпуçĕнче пурăнакан А.Ф.Федоров çакна шута илмен пулмалла. Кӳкеç урамĕпе хăвăрт пынă чухне çăмăл автомашинине тытса чарайманнипе çул хĕррине тухса кайнă, йывăçа пырса тăрăнтарнă. Çавна пула унпа пĕрле салонра ларса пынă Е.А.Вахтеров пассажир хытă çапăнса сывлăхне йывăр сусăрлатнă. Район сучĕ çак уйăхра А.Федоров Уголовнăй кодекспа пăхнă преступлени тунă тесе йышăнчĕ, ăна 9 уйăхлăха ирĕклĕх прависĕр хăварчĕ. Чăн та, çак вăхăта ун условно, çулталăклăх тĕрĕслевпе ирттерме тивет.

А.РОМАНОВ, район прокурорĕн пулăшуçи.

Ĕçсĕрлĕх

ÇĔНĔ ВЫРĂНСЕМ

Районти халăха ĕçе вырнаçтаракан центрта февралĕн 24-мĕшĕ тĕлне ĕçсĕррисен учетне 847 çынна тăратнă. Ĕç шырама кунта учетра тăракансем çеç мар, тăманнисем те килеççĕ. Ĕçсĕрлĕх сарăлса ан пытăр тесе Раççейри, республикăри, районти влаç органĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Февралĕн 18-мĕшĕнче, акă, ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров Федерацин ĕçе вырнаçтаракан службипе килĕшӳ тунă, икĕ ен республикăри халăха 2009 çулта ĕçе вырнаçма пулăшас тĕллевпе пурнăçламалли хушма мерăсене палăртнă, республикăн тĕллевлĕ программине çирĕплетнĕ.

«Хушма мерăсене пурнăçа кĕртме федераци бюджетĕнчен 2009 çулта республикăна 526,3 мĕльюн тенкĕ уйăраççĕ, республика бюджетĕнчен – 26,3 мĕльюн тенкĕ, – терĕ ĕçсĕррисен умĕнче центр директорĕ Л.П.Пахомов. – Ĕçсĕрлĕхе вăйсăрлатас тĕллевпе ĕçе вырнаçтаракан центрсене 4 енĕпе ĕçлеме хушнă. Предприяти-организацирен ĕçлекенсене йышлăн кăларса ярас хăрушлăх тухса тăнă, тулли мар ĕç кунĕ çине куçнă, производствăна вăхăтлăха чарса лартнă, ĕç укçи сыхласа хăварасăр отпуска янă, ĕçлекенсене предприятирен кăларса ярас ыйту тухса тăнă чухне алла çĕнĕ професси илме пулăшмалла. Республикăри 49 организаци çав çул çине тăрасси çинчен пĕлтернĕ. Çакă хушма тăкак курмасăрах предприяти-организацисене 3508 çынна çĕнĕ специальноçа вĕрентме, вĕсен ĕç вырăнне сыхласа хăварма май парĕ».

Иккĕмĕш ен – обществăри ĕçсене хутшăнтарасси, ĕçсĕррисене стажировка витĕр кăларасси. Кунта сăмах ял тăрăхĕсенче обществăлла ĕçсене явăçтарасси пирки пырать. Вăтам шкул пĕтерекенсене те хутшăнтарĕç. Республикăра 29066 çын валли вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тума пăхаççĕ (1741 – çул-йĕр çинче, 4000 – училищесенче професси пĕлĕвĕ илекенсем валли).

Виççĕмĕшĕ – ĕçе вырнаçма урăх çĕре тухса каякансене адреслă пулăшу парасси. Ку енĕпе ĕçе анлăн сарма палăртман. Тăваттăмĕшĕ – пĕчĕк предпринимательствăна ĕçсĕррисене явăçтарасси. Республикăри 170 çынна ĕç пуçласа яма бюджетран укçа уйăрĕç.

Кĕскен, ĕçсĕррисен центра каланă вăхăтра пырсах çӳремелле. Куллен çĕнни кунта. Февралĕн 20-мĕшĕнче, акă, вакансисен ярмăркки иртрĕ, унта учетра тăракан 20 хĕрарăм хутшăнчĕ.

«Эпир сире вăхăтлăха Кӳкеçри «Текстильоптторг» обществăра ĕçлеме сĕнетпĕр, – терĕ малалла Л.П.Пахомов. – Унта вăй хурсан сире патшалăх уйăхне 1700-шер тенкĕ тӳлесе тăрĕ, кунсăр пуçне эсир продукци мĕн чухлĕ хатĕрлесе панине пăхса предприяти ĕç укçи тӳлĕ. Çапла вара сирĕн кашни уйăхра пособи (вăл кашнин тĕрлĕ), центртан тепĕр 1700 тенкĕ тата обществăран тивĕçлĕ шалу пулĕ».

Предприяти представителĕ М.П.Алексеева центрта учетра тăракансене килте пурнăçламалли ансат ĕçпе паллаштарчĕ: арланă çипрен чăлха çыхмалла иккен. Асаннесен пански йĕппипе. Кашни мăшăртан ĕç укçи 25 тенкĕ параççĕ. Васкамасăр ĕçлекенсем 12 кунра 40-шер çыхаççĕ, 1000-шер тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Продукци кирек мĕн чухлĕ кайса парсан та центр 1700-шер тенкех тӳлет. Тĕл пулăва пынă 20 çынран 18-шĕ çырăнчĕç те.

Центр паян халăха ĕçе вырнаçтарас тесе тĕрлĕ май шырать. «Паян ман ĕç кунĕ ăнăçлă иртрĕ тесе шутлатăп, – терĕ Л.П.Пахомов. – 18 çынна вăхăтлăх ĕç тупса пама май килчĕ».

Ю.МИХАЙЛОВ.

КИЛТИ ХУÇАЛĂХ

СОРТПА СОРТ ПĔР МАР

Пахчаçăсем валли

Пахча çимĕç тухăçлă пуласси вăрлăхран нумай килет. Кашни сортах çимĕç хăш вăхăтра пулса çитнипе, тухăçĕпе, мĕнле упраннипе т.ыт.те уйрăлса тăрать. Унсăр пуçне культура чир-чĕре, сивве парăннипе парăнманнине шута илмелле.

Чылайăшĕ çулсерен çĕнĕ сорт туянма тăрăшать. Кунта чи малтанах вăл е ку сорт пирĕн тăрăхра ўсме пултарнине е пултарманнине (урăхла каласан, районланă-и е районламан-и) асăрхамалла. Çанталăк мĕнле пулнине кура пĕр сортах тĕрлĕ çулта расна тухăç парать.

Вăрлăх туяннă чух вăл мĕн вăхăт упраннине тĕрĕслĕр. Упраннă май кирек епле вăрлăх та шăтаслăхне çухатса пырать. Шăтаслăх тесе тĕрĕслеме акнă 100 вăрăран миçе вăрлăх шăтни тăрăх калаççĕ. Акмашкăн шăтаслăхĕ 80-90, 80-90 процентран кая мар вăрлăха илме сĕнеççĕ.

Тĕрĕс мар упрани вăрлăх шăтаслăхне чакарать. Ăна вăрлăх 10-12 градус температурăра, типĕ çĕрте упрамалла. Вăрлăхлă хутаçсене кантăк банкăсенче, хупăлчипе питĕрсе тытмалла. Çавăн пекех целлофан хутаçсемпе те усă курма юрать. Вăрлăх типесрен хутаça лайăх çыхмалла.

Тепĕр саманта шута илме тăрăшăр. Енчен эсир кăçал пĕрпĕр культурăран пысăк тухăç илтĕр пулсан унăн вăрлăхне çав лавккаран кăçалах илсе хума тăрăшăр. Мĕншĕн тесен çуркунне лавккасенче урăх тухăçран хатĕрленĕ вăрлăхсем сутма пуçлаççĕ.

ИЛЕМЛĔ ТЕ, ТУХĂÇЛĂ ТА

Пылак пăрăça килте туса илме йывăр тесе ўстерместĕп. Анчах нумаях пулмасть «Мираж» тата «Зорька» сортсем аван тенине илтрĕм. Тĕрĕсех-ши?

А.КОНСТАНТИНОВА.

Асăннă сортсен тухăçĕ уçă вырăнта ўстерсен пысăк пулать. Икĕ сорчĕ те перекетлĕ, тĕмми чечек çыххи евĕр. 7-11 пăрăç харăс пулса çитнĕ çĕре тепĕр ăстрăмĕ ўссе пырать.

Аякран пăхсан çак икĕ сорт чечек çыххине аса илтерет. Пĕр тĕм çинче шурă, сарă, кĕрен, хĕрлĕ тĕслĕ пăрăçсем харăсах ўсеççĕ. Пиçсе пынă май çимĕçĕн тĕсĕ улшăнать: шурă тĕс малтан сарăрах, унтан сарă пулать, каярахпа кĕрене, юлашкинчен хĕрлĕне куçать.

«Мираж» сорт хăвăрт ўссе çитĕнет, «Зорька» – каярах, анчах унăн çимĕçĕсем шултрарах. Икĕ сортне те пленка айĕнче те, уçă вырăнта та çитĕнтерме пулать.

Парникре «Звезды Востока» FI сорт пăрăç аван ўсет. Унăн çимĕçĕ тăваткалрах. Хăйĕн «тумне» вăл шурă тата сарăрах хĕрлĕ тĕсрен пуçласа ылтăн, мандарин, кăвак, шăккалат тĕс таранччěнех улăштарать. Çимĕç хуппи хулăн, çимĕç хура кĕрччěнех татти-сыпписĕр ўсет.

СЫВĂ ÇУРА ИЛЕС ТЕСЕН

Килти выльăх-чĕрлĕх

Владимир Тихонов ветврач каланă тăрăх, сысна амин организмне чи малтанах шĕвĕрĕлченрен тасатмалла. Мĕншĕн тесен вĕсем сыснан организмне халсăрлатса яраççĕ. Анчах çак ĕçе амана пĕтĕлентернĕ хыççăн çеç пурнăçламалла. Мĕншĕн çавăн пек-ха? Мĕншĕн тесен сысна аçи чирлĕ пулсан шĕвĕрĕлчен аçаран та лекме пултарать.

Хальхи вăхăтра выльăха эмел кăна мар, ятарлă хушма апат та пама пулать. Сăмахран, «Айболит». Унта шĕвĕрĕлченрен эмел те, тĕрлĕ витаминпа минерал та пур.

Сысна амине уçă сывлăш кирлĕ. Апла пулсан, ăна вĕçĕмех уçăлтармалла. Витерен хăй тĕллĕн тухса кĕме ятарлă вырăн пулсан тата лайăх. Тепĕр тесен, кун пек чух хуçине хăйне те çăмăл: ама тухас тенĕ чух тухать, кĕрес тенĕ чух кĕрет.

Анчах çумăрта тата вăйлă сивĕре урама кăларма кирлĕ мар.

Сысна витине ăшă тата таса тытăр. Кашни апатлантармассерен сысна амине таса шыв ĕçтерĕр. Вăл юр çиесрен, сивĕ е кўлленчĕкри шыва ĕçесрен асăрхасах тăмалла.

Пĕтĕ аман рационĕ тулăх пултăр. Çемçе утă, пăрça йышши курăкран пулсан пушшех аван, кунне 2-2,5 кг; 5-6 кг кăшман, кишĕр, пĕçернĕ çĕр улми, кавăн; 1-1,5 кг авăртнă тырă (сĕлĕ, урпа, кукуруза, ыраш) е хывăх; 3 л таран сĕт-турăх; 2,5 апат кашăкĕ тăвар тата пурă. Тата, паллах, ятарлă хушма апат (ăна ветеринари аптекисенче тупса илме пулать).

Тепĕр кил хуçисем сысна ами икĕ хутран ытла йĕркеллĕ çура паманни, вилĕ çура çăвăрлани пирки пăшăрханнине пĕлтереççĕ. Владимир Тихонов ветврач ăнлантарнă тăрăх, рационтан нумай килет. Сысна амине углевод, микро- тата макроэлементсем, витаминсем çителĕксĕр парсан çура илме çăмăл мар. Кирлĕ хăш-пĕр компонет тепĕр апатра пачах çук иккен.

МАШИНА ЧĔРĔЛМЕСТ

Сивĕ çанталăкра автомобиль çăмăллăн чĕрĕлтĕр тесен ансат çак канаш пулăшĕ: чи малтан аккумулятора ăшăтмалла. Çавна валли темиçе çеккунтлăха инçете çутатакан çутăна çутăр. Пĕлекенсем каланă тăрăх, питĕ лайăх меслет. Двигатель чĕрĕлесшĕн марах чухне стартера ытлашши нумай çавăрмалла мар, аккумулятора кантарса илмелле те чĕртме кăштахран тепĕр хут хăтланса пăхмалла.

ЧЎРЕЧЕНЕ ТĔКСĔМ СĂН ÇАПАТЬ

Автомобиль чўречине кăштах тĕксĕм сăнлă тăвас тесен пăхăр купоросĕн шывĕпе (пĕр литр шыв пуçне 1 чей кашăкĕ купорос илĕр) сăтăрмалла. Çав шĕвекпе сĕрнĕ хыççăн кантăка симĕсрех тĕс çапĕ. Типĕ ультрамарин синькипе сăтăрсан кăвакрах тĕслĕ пулать.

ЧĂХПА АПЕЛЬСИН САЛАЧĔ

1 банка кукуруза, 3-4 апельсин, 3 чăх тукмакки, майонез, тăвар.

Чăх какайне пĕçерсе тăваткал турамалла. Хуппине тасатнă апельсина та вĕттĕн ваклӑр. Хатĕр ингридиентсене кукурузăпа хутăштармалла. Сĕтел çине лартас умĕн тăвар сапăр, майонез ярăр.

СЫРПА ХĔРЛĔ ПУЛĂ

2 хĕрлĕ пулă фили, 150 г çĕр улми, 100 г сыр, 2 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕ, петрушка, тип çу тата услам çу, тăвар, пăрăç.

Соус валли: пулă пĕçернĕ шыв 0,5 стакан, 50-шар мл çăра сĕт тата шурă типĕ эрех, 2 апат кашăкĕ услам çу, 1 сухан, 1 шăл ыхра, тăвар, пăрăç.

Хуппипе пĕçернĕ çĕр улмине тата сыра теркăламалла, вĕттĕн туранă петрушка хушмалла. Пулăна пĕрер порцилĕх турамалла та лимон сĕткенĕ ярса, тăварпа пăрăç хушса тип çупа ăшаламалла. Унтан ăна услам çу сĕрнĕ формăна ямалла, ун çине сырпа çĕр улми хумалла. 250 градуслă духовкăра 10 минут пĕçернĕ хыççăн ешĕл çимĕç тата соус ярса сĕтел çине лартаççĕ.

Соуса çапла хатĕрлемелле: суханпа ыхрана вĕттĕн тураса услам çупа пăшăхлантарăр, эрех хушса 5 минут тытăр, пулă бульонĕ, çăра сĕт ярăр, тăвар сапма ан манăр. Çулăм çинче тепĕр 10 минут тытнă хыççăн соус хатĕр.

Кĕске канаш

ЙĔРЕС КИЛМЕСЕН...

Сухана шуратнă чух яланах куççульлентрет. Анчах сире пирĕн сĕнў пулăшĕ. Сухана пĕр-пĕр савăта хурăр та вĕри шыв ярса кăштах тытăр. Çавăн хыççăн ăна тасатма та лайăх, куça та шывлантармĕ.

ШĔКĔНЕ МĔНЛЕ ПĔТЕРМЕЛЛЕ?

Çирĕм çул каялла йывăçран çурт лартрăм. Çулла урай хăмисене аял енчен темĕнле хурт-кăпшанкă çиме пуçланине асăрхарăм. Ăна мĕнле майпа пĕтерме пулать-ши?

Эсир çырса кăтартнă тăрăх пăхсан, сирĕн çурта йывăça çиекен шĕкĕ ернĕ. Вăл темиçе çул хушшинче çирĕп урай хăмисемпе уратисене юрăхсăра кăларма пултарать.

Йывăça сиен кўрекен хурт-кăпшанкăсем çĕр тĕрлĕ ытла шутланаççĕ. Кил-çурт таврашĕнче ытларах йывăç çурта тата сĕтел-пукана çиекен шĕкĕ тĕл пулать.

Шĕкĕ çакăн пек условисенче аталанать: сывлăш пур, унăн температури нуль градусран ăшăрах, йывăçра сухăр хисепĕ сахал тата йывăç типĕ (унăн нўрлĕхĕ 20 процентран ытла мар) чухне.

Шĕкĕ темиçе тапхăр аталанать. Вĕсен пĕтĕм аталанăвĕ пĕр çулталăк хушшинче пулса иртет. Çитĕннĕ хурт-кăпшанкăсем çуллахи вăхăтра йывăç çурăкĕсене е кивĕ шăтăксене çăмартасем хураççĕ. Çăмартасенчен нăрăсем аталанса каяççĕ, унтан вĕсем йывăça шăтарма пуçлаççĕ. Нăрăсем шăтăк шăтарнă май, ăна йывăç çăнăхĕпе хупласа пыраççĕ. Малалла нăрăсенчен шĕкĕсем пулса тăраççĕ. Шĕкĕсем май уйăхĕнче е июнь пуçламăшĕнче йывăça шăтарса тухаççĕ. Шĕкĕ тунă шăтăкăн диаметрĕ – 3 мм, тарăнăшĕ – 10 мм яхăн. Шĕкĕ хурахăмăр тĕслĕ, тăршĕ – 4,5-5 мм, çурăмĕ çинче икĕ сарă пăнчă, çавăнпа вăл сĕтел-пукана çиекен хурт-кăпшанкăран уйрăлса тăрать. Ăшă кунсенче сехет шаккăнă евĕр сасă кăларать.

Йывăça çиекен шĕкĕ çуртăн аялти, чўречене айĕнчи тата кĕтесри пĕренесене, урай хăмисемпе уратисене, мачча хăмисемпе каштисене, чартакри йывăç япаласене сиен кўрет. Урăхла каласан, кун йышши шĕкĕ сивĕ, йывăçăн температури тата нўрлĕхĕ улшăнса тăракан вырăнсенче ĕрчет.

Сĕтел-пукана çиекен шĕкĕ, йывăça сиен кўрекен хурт-кăпшанкă пекех, темиçе тапхăр аталанать, сехет шаккăнă пек сасă кăларать. Çак пĕчĕк шĕкĕсене асăрхама çăмăл мар, вĕсем çĕрлехи вăхăтра кăна куçаççĕ. Шĕкĕ тăршшĕ – 3-4 мм, вăл тунă шăтăкăн диаметрĕ – 1,5-2 мм. Кун йышши шĕкĕ сĕтел-пукана кăна мар, çурт ăшĕнчи тĕрлĕ йывăç япалана, çавăн пекех унăн стенисене сиен тума пултарать.

Шĕкĕне вăхăтра тупса пĕтерес тесен, кил-çуртри йывăç япаласене вăхăтран вăхăта тĕрĕслесе тăмалла. Шĕкĕ ĕрчеме пуçланине асăрхама йывăр мар. Йывăç çинчи пĕчĕк шăтăксем, вĕсенчен кăларса тăкнă йывăç çăнăхĕ тата шĕкĕ кăларакан сасăсем тăрăх пĕлме пулать. Çавăн пекех шĕкĕне çуркунне чўречене кантăкĕсем çинче курма пулать.

Шĕкĕ çинĕ йывăç пахалăхне лайăх тĕрĕслемелле. Йывăça ытлашши юрăхсăра кăларнă пулсан, ăна çĕннипе улăштармалла. Шĕкĕ ытти çĕрте аталанса ан кайтăр тесен, вĕсем çинĕ йывăça пĕр çĕрте пухса çунтарса ямалла. Шĕкĕ йывăça кăшт кăна çинĕ пулсан, химикатпа сĕрсе пĕтерме пулать. Скипидарпа краççын (3:1), бензинпа нафталин хутăшĕпе, çавăн пекех ятарлă шĕвексемпе усă курма юрать. Çак шĕвексемпе усă курас умĕн инструкципе тĕплĕн паллашмалла. Шĕвексене киçтĕкпе е сăрă сирпĕтмелли хатĕрсемпе витмелле. Шĕвек хутăшне икĕ-виçĕ хут сĕрсен аван. Иккĕмĕшĕпе виççĕмĕш хучĕсене 2-3 эрнерен кăна витмелле. Пĕр тăваткал метр йывăça виçĕ хут витме 300-500 грамм хутăш кирлĕ. Хутăша çуркунне е кĕркунне сĕрсен аван, мĕншĕн тесен ку вăхăтра шăтăкри нăрăсем çывăхра пулмаççĕ.

Йывăça шĕвекпе витнĕ чухне пўлĕм температури 15-20 градус ăшă пулмалла. Ун хыççăн алăксене, сывлăша уçăлтармалли пăрăхсене хупмалла. Иккĕмĕш кунне шăршăна кăларса яма пўлĕме лайăх уçăлтармалла.

Кил-çуртра шĕкĕ ан ĕрчетĕр тесен пўрт тунă е ăна юсанă чухне çирĕп те типĕ тата шĕкĕ ермен йывăçпа усă курмалла, шĕкĕ ернĕ вутăпа кăмака хутмалла мар, шĕкĕ тапăннă сĕтел-пукана пўрте илсе кĕмелле мар. Пўлĕмре сывлăш лайăх куçтăр тесе шифоньерсене, шкапсене, сĕтел-пукана стена çумне хушăк хăварса лартмалла. Çавăн пекех пўлĕмре йывăçран тунă тĕрлĕ япала (ещĕк, хăма татăкĕ тата ытти те), вут-шанкă ан усрăр. Шĕкĕ çутă, типĕ çуртра ĕрчеймест, çавăнпа пўлĕмсене тăтăшах уçăлтармалла.

В.ИВАНОВ.

Страницăна тата фото ўкерчĕке В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.

ПЕНСИОНЕРСЕНЕ КАМ КӲРЕНТЕРЕТ?

Февралĕн 20-мĕшĕнче район прокуратури çумĕнчи пенси страхованийĕ валли обязательнăй йĕркепе страховка тӳлевĕ мĕнле куçарса тăнине тĕрĕслесе тăракан ĕç ушкăнĕн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Унта пенси страхованийĕ валли обязательнăй йĕркепе страховка тӳлевĕ куçарса тăманнипе парăма кĕнĕ 22 предприяти ертӳçипе тĕп бухгалтера чĕнтĕмĕр. Çав предприятисен 891,6 пин тенкĕ пухăннă, вĕсенчен ĕç пенсийĕн страхлакан пайĕ – 722, 8 пин тенкĕ. Çирĕп, çав вăхăтрах конструктивлă калаçу иртрĕ. Нумайăшĕ хăйсен йăнăшне тĕнче шайĕпе пыракан кризис çине йăвантарма пăхрĕ, анчах та эпир вĕсене нихăшне те йышăнмарăмăр.

Чăн та, 22-шĕнчен 8-шĕ («Мегатон-трейд ТПК» АХО, «ТАА-Сервис», «Шанс» ООО, «Чувашское» АУО, «Сервис АТП» ООО, «Транспортник» ООО, «СМУ-75» ООО, «Экохаус» ООО) ларăва пыриччен парăма парса татма тӳлев хушăвĕсем хатĕрленĕ, прокуратурăна вĕсен копине пĕрле илсе пынă.

«Птицевод» сад пĕрлешĕвĕн тĕп бухгалтерĕ З.Л.Порфирьева йăрансем хушшинче дачниксем – Шупашкарта пурăнакансем – курăнма пуçласан парăмпа татма шантарчĕ. В.Д.Степанов пуçлăх вара ĕç ушкăнĕн ларăвне темшĕн хутшăнас темерĕ. Бухгалтер сăмахĕнчен вăл студентсемпе заняти ирттернине пĕлтĕмĕр. Страхлакан тӳлеве Пенси фондне вăхăтлă тӳлемелли пирки ăнлантарса панă ахăр вăл, çавăнпах ĕçлĕ канашлăва та килеймен. «Ленкост» общество бухгалтерĕ те РФ Пенси фондне предприяти парăмне парса татма тӳлев хушăвĕ хатĕрлесси, ăна илсе килсе кăтартасси çинчен пĕлтерчĕ, анчах хăй кайран курăнмарĕ. 7 предприяти ертӳçи – «Ремспецкомплект» ООО, «Средняя Волга» АУО, Восход СПССК, «Полиблок-строй» ООО, «Связьинвестстрой» ООО, «Теплый дом» ООО, «РППТОИНАТТ» ООО – çак канашлу хыççăн çывăх вăхăтра парăма пĕтерме шантарчĕç. Пенси саккунне пăхăнманшăн 9 предприяти ертӳçине административлă тата уголовнăй майпа явап тыттарма пултарнине аса илтертĕмĕр.

А.ИСАЕВА, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи;
А.ИВАНОВ, район прокурорĕн çумĕ.

Спорт

СПАРТАКИАДА 3–МĔШ ХУТ ИРТРĔ

Ишлей ял тăрăхĕнче февралĕн 22-мĕшĕнче кăçалхипе виççĕмĕш хут хĕллехи ялти спартакиада иртнĕ. Ун пирки Я.В.Кушев пуçлăх каласа кăтартрĕ.

– Йĕлтĕрпе ярăнакансем хальхинче нихçанхинчен те нумайрах пулчĕç, 4 ушкăнпа старта тăчĕç. Арçынсемпе пĕр танах хĕрарăмсем те йĕлтĕр сырнине курма кăмăллă пулчĕ. Кире пуканĕ йăтасси те пирĕн тăрăхра вăй илсе пырать. Çĕнтерӳ пьедесталĕ çине тăрассишĕн пĕр вăхăтра тӳрех 9-ăн тупăшрĕç. Футболла выляканcем тĕлĕшпе пĕлтерӳ çакма та кирлĕ мар – тӳрех темиçе команда йĕркелеççĕ. Хамăр тăрăхрисĕр пӳçне Ишекрен, Карачураран, Çĕньял-Покровскинчен командăсем килчĕç. Апла пулин те 11 команда хушшинче Ишлейри «Çамрăк» ушкăна никам та çĕнтереймерĕ, вĕсем куçса çӳрекен Кубока тивĕçрĕç. Спорт мероприятине массăллă ирттерес тесе вырăнти предприяти-организацисем, уйрăм предпринимательсем пулăшаççĕ. Кунта А.Иванов тата О.Субботина уйрăм предпринимательсене, «Надежда» ПКФ» общество ертӳçине Н.Павлована палăртса хăвармалла. Малти вырăнсене тухакансене пурне те Дипломсемпе парнесем патăмăр. Уява йĕркелеме пулăшнă С.Якимовпа Д.Изыкова «Единая Россия» партин районти уйрăмĕн Тав çырăвĕ лекрĕ, – терĕ Яков Васильевич.

А.СУСМЕТ.

ЮРАТУ ФРОНТĔНЧЕ ШĂПРАХ

Эстрадăн Тойтерекре пурăнакан паллă юрăçине Ирина Пономаревăна юратаççĕ, радиопа, концертсенче итлеççĕ. Вăл – халăх кăмăлласа йышăннă юрăçсенчен пĕри. Ытлари кун Иринăна хулари чăвашсен дискотекинче курма тӳр килчĕ (ăна чăвашсен чи салху роккерĕ Александр Егоров сантехник-юрăç Хусанкай урамĕнчи 22-мĕш çуртри кафере ирттерет). Куртăм та тĕлĕнтĕм: 10 çул каяллахи пекех илемлĕ-çке вăл! Упăшки ăна килĕнчен хулана куллен мĕнле кăларса яратьши?.. Çӳçĕ çинçе пилĕкĕ таран. Куçĕсем тата... Ай-уй, куçĕсем тата... – хĕвелпе ялкăшакан çĕмĕрт çырли пек. Йăрăс пӳллĕскер, кафере пухăннă яшкĕрĕмпе хĕр упраça хăйĕн юррисемпе тыткăнларĕ. Унпа сăмах вакласа илнĕ хушăра: «Юрату фронтĕнче улшăнусем пур-и?» – тесе ыйтма хăйрăм. «Пысăк улшăнусем çукрах, – пулчĕ хурав. – Упăшка çавах, ачасем сывах...»

Тепĕр çĕнĕ хыпар: эсир унăн магнитоальбомне туянма пултаратăр.

Ю.ЮМАН.

Милици сводкинчен

ВĂРĂ КАМНЕ ПАЛĂРТНĂ

Февралĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшĕччен пирĕн район территорийĕнче 12 преступлени тунине регистрацилене. Вĕсенчен 6-шне тӳрех уçса пама май килчĕ.

Алюмини пăралукĕсене вăрлани пирки иртнĕ номерте çырнăччĕ. Çатра Маркари шыв башни патĕнчен «Слава» хуçалăхăн слесарь мастерскойĕ патне çити 300 метр пăралука йăкăртакан ку ялтах пурăнать. Хыркассинче пурăнакан çул çитмен ачасен куçне вара сотовăй телефон лекнĕ. Унăн хуçи вĕсемпе пĕр тантăшах пулнине пăхмасăрах телефона хăйсен тунă.

В.НИКИТИН, обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕ.

Ылӑму – хурав

ÇĔННИСЕМПЕ УЛĂШТАРНĂ

Çĕньял ял тăрăхĕн администрацийĕ 2008 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче мана ялтан каяш илсе тухма Çĕньял урамĕсене тепĕр 50 контейнер вырнаçтарнă тесе хурав пачĕ. Хăçан туянчĕç-ши?

М.КАРДАИЛЬСКАЯ.

Ял администрацийĕ вырăнти бюджет укçипе 2008 çулта ялсенче каяш пухма çĕнĕ 40 контейнер туянчĕ. Пĕри паян 4500 тенкĕ ытла тăрать. Çакăнтан 31-шне Çĕньялта, 3-шне Алькешре лартрăмăр, тепĕр 6-шне Янашкассинчи общежити умне лартма палăртнă. Çĕньялти контейнерсенчен чылайăшĕ кивелсе çитнĕччĕ, вĕсене çĕннипе улăштартăмăр. Кăçал каллех туянма шутлатпăр.

Е.ЗУБКОВ,
ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

УЯСА ТĔТĔМЛЕМЕЛЛЕ

Муркаш районне кĕрекен Шомикре, Атăльялпа юнашар, психоневрологи интерначĕ пур, кирлĕ пулсан унта пирĕн районсене те сиплеççĕ. Нумаях пулмасть ăна экологсем тĕрĕсленĕ, мĕн тупса палăртнă-ши?

Атăльялсен ыйтăвĕ.

Пирĕн министерство специалисчĕсем Шомикри психоневрологи интернатне планпа килĕшӳллĕн тĕрĕсленĕ. Вăл каяш пухса пымалли нормативсен проектне туса хатĕрлемен, каяш купаласа пымалли çирĕплетнĕ лимитсăрах ăна хурса, купаласа, пухса пырать. Ятарласа ирĕк илмен пулсан та атмосферăна этем сывлăхĕшĕн сиенлĕ тĕтĕм кăларать, ăна вараланăшăн укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен вăхăтра саплаштармасть. Çак çитменлĕхсемшĕн министерство интернатăн должноçри çыннине штраф тӳлеттерме йышăнчĕ.

ЧР Çут çанталăк министерстви.

ХĔРЕ МĂШКĂЛЛАМАН

Тренккасси каччисем Шупашкартан хăнана килнĕ пĕр хĕре ушкăнпа мăшкăллана текен сас-хура сарăлчĕ. Такам милицие телефонпа шăнкăравласа та пĕлтернĕ терĕç. Çакă чăнах та пулнă-ши?

Н.ПЕТРОВА, Шĕнерпуç.

Ку шăнкăрава РФ Следстви комитечĕн Çĕнĕ Шупашкарти следстви уйрăмĕ тĕрĕслерĕ. Çав хĕр, Шупашкарта пурăнаканскер, кăçалхи январĕн 10-мĕшĕнче Тренккассине туя килнĕ, ун хыççăн тантăшĕсемпе ялти дискотекăна кайнă, унта каччăсемпе паллашнă, ташланă. Çур çĕр иртсен вăл хăйĕн ирĕкĕпех темиçе каччăпа ар çыхăнăвне кĕрет. Ăна никам та пусахламан, ар çыхăнăвне кĕме ӳкĕте кĕртес тĕллевпе çапман, хĕнемен. Пикепе çывăхланма каччăсене те никам та хушман, вăйпа усă курса хистемен. Çакна шута илсе эпĕ хĕре мăшкăллани пирки уголовнăй ĕç пуçарассине хирĕç йышăну кăлартăм.

А.ИГНАТЬЕВ, уйрăмах йывăр преступленисене тĕпчекен следователь.

ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

Спутниковые ТВ, ТРИКОЛОР и др., гарантия, низкие цены от дилера. Тел.: 89033571163, 8 927 990 07 99.

ПРОДАЮ керамзитобетонные блоки 20х20х40, 12х20х40, цемент. Тел.: 89050284130, 89033462293.

Триколор и др. спутниковое бесплатное цифровое телевидение и радио. Пенсионерам, работникам милиции, льготникам скидка. Тел.: 89083000468.

ООО «Завод Лит» изготовит заборы, ограды, решетки оконные, от 500 руб. кв.м. и другие кованные и сварные металлоизделия. Адрес: п.Кугеси, ул.Шоршелская, д.12. Тел.: 8 (83540) 2-19-57, 8-902-663-09-74, 68-16-37.

Продаю керамзитобетонные блоки 190х190х400, 120х190х400. Доставка. Тел.: 89276677444.

Поправка. В газете «Тёван ен» №№144-145 от 13.12.2008 г. в объявлении о выделении земельной доли СХПК «Слава» Волкову В.Ю. вместо слов «21:21:27 22 01:0011» следует читать «21:21:27 22 01:0001» и далее по тексту.

Собственник земельных долей Одеряков Г.В. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Искра» Чебоксарского района ЧР в счет доли 4,96 га пашни, поле №4 первого полевого севооборота, расположенные южнее д.Хыршкасы. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

Предполагается предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0358 га с кадастровым номером 21:21:220402:39, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Самуково, ул.Нижняя (земли населенных пунктов), для огородничества. ***Адрес: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

Поправка. В газете «Тёван ен» №№5-6 от 24.01.2009 г. в объявлении о предоставлении в аренду земельного участка после слов «д.Митрофанкасы» следует добавить слова «ул.Ленина» и далее по тексту.

❋ ❋ ❋

Администрация Ишлейского сельского поселения выражает глубокое соболезнование председателю Совета ветеранов Николаеву Геннадию Николаевичу в связи с трагической смертью двоюродного младшего брата

Александра САМАРКИНА.

Коллектив МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование Андреевой Надежде Николаевне, медицинской сестре глазного кабинета поликлиники МУЗ «Чебоксарская ЦРБ» в связи со смертью сестры (1935 г.р.)

Людмилы Николаевны НИКОЛАЕВОЙ.

ПОСТАНОВЛЕНИЕ

18.02.2009 г. № 39/266-IV г. Чебоксары

О заявлении члена Чебоксарской районной территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса Блинова Анатолия Викентьевича

В соответствии с пунктом 6 статьи 29 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и на основании заявления члена Чебоксарской районной территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса Блинова Анатолия Викентьевича Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

1. Освободить Блинова Анатолия Викентьевича от обязанностей члена Чебоксарской районной территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.

2. Предложить политическим партиям, иным общественным объединениям, представительным органам местного самоуправления, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок не позднее 24 февраля 2009 года представить в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики предложения по кандидатуре в состав Чебоксарской районной территориальной избирательной комиссии.

3. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики ***Л.Н.Линик***

Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики ***Е.Б.Шевлягина.***

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Ăăçåòà çàðåãåèñòðèðîâàíà â Óïðàâëåíèè Îôèñîðîâëåíèÿ ñïîæàâû ïî íàäçîðó çà ñîáëþäåíèåì çàêîíîäàòåë�íîãî çàêîíîäàòåëьíîãî
â ñîîòâåòñòâèè ñ ïîñòàíîâëåíèåì è ïîðÿäêå èñïîëíåíèÿ
íàñåëåíèÿ ïî Ìèêåñåíêî Îëåãó Âàñèë�åâèчу
8 íîÿáðÿ 2005ã. ÍÈ ¹ÓÑ 18-2477

Ó÷ðåäèòåëè:
Ìèíèñòåðñòâî êóë�òóðû, ïî äåëàì
íàöèîíàë�íîñòåé, èíôîðìàöèîííîé
ïîëèòèêè
è àðõèâàìîâ äåëà ×óâàøñêîé Ðåñпóáëèêè,
ÐÃÓ “ Ðåäàêöèя ×åâàøñкîé ðàäèîííîé ãàçåòû “Òăâăàí Ãí”,

429500, ×åâàøñкàðñêèé ðàéîí,
ïîñ. Êóãåñè, óë. Øîссåéíàя, 13.

Ăàçåòà âûõîäèò íà ÷óâàшñêîм ÿçûêå,
ñ ïåðåâîäîм íà ðóññкèé ÿзûк ðóññкîãî,
äâà ðàçà â íåäåëю - ïî ñóббàòàì è ñóббîòàì.

Ðóêîïèñè íå âîçâðàщàþòñÿ è íå ðåöåíзóþòñÿ. Îтóâåòñтâåнíîñòь çà äîñòîâåрíîсòь ïóáëèкóåмûх ôàкòîâ íåсóò àвòîры. Çà ñîäåðæàíèе ðåêлàмíûх îбъяâлåíèй îтâåòñтâåнíîñòь íåсóò ðåêлàмîäàòåли.

Ãл. редактор – 2-12-61, корреспонденты – 2-21-88, 2-13-80, бухгалтерия -2-12-59, прием объявлений – 2-13-80.
E-mail: gazeta@chebs.cap.ru. Сайт www.tavan-en.cap.ru.

Номер отпечатан в ГУП ЧР «Цивильский издательский дом» Минкультуры ЧР. Тел:. 21-8-59.

È.î. ãëàâíûé ðåäàêòîð Â.Ò.ÈÂÀÍÎÂÀ

Äåæóðíûé ïî íîìåðу:
Þ.Ñ.ÌÈÕÀÉËÎÂ.

Ïåõàòü îôñåòíàя. Îáúåì 2,0 ïå÷. ëèñò.
Íîìåð ïîäïèñàí â ïå÷àòü: 24.02.2009 ã.
â 16 ÷àñ. 00 ìèí.
Òèðàæ 2150. Çàêàç ¹
Ìîäåêñ ãàçåòû - 54820.